# Шăмăршă ывăлĕ

**Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**
**Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ**
**Раççей Федерацийĕн Правительствин «Душа России» преми лауреачĕ**
**СЕРГЕЙ ФЕДОТОВ**



**Сергей Васильевич Федотова, Чăваш Енре çеç мар, Раççейре çеç те мар, чикĕ леш енчи хăш-пĕр çĕршывсенче те пĕлекен Шупашкарти ачасен пултарулăх кермен̆ĕ çумĕнчи «Эревет» ансамблĕн ертӳçине, чылайранпа пĕлетĕп. Музыкăна, тăван юрра-кĕвве, чи хакли – çынсене – юратакан-хисеплекен Шăмăршă ывăлĕн ансамблĕн ĕçне-хĕлне кăмăлламан çын çуках. Пĕчĕк кăна шăпăрлансем, ӳссе пыракан хĕрачасемпе арçын ачасем аллисене купăспа баян, параппанпа ача-пăча шăкăртми, йывăç кашăкпа шăхлич тытса сцена çине тухсан кашнин чун-чĕринчех ырă туйăм çĕкленет.**

*Ăс-тăну çитейменнине пĕлме ан тăрăш, ху пĕлме пултарайманнине сана нумай кăтартнă, çапла, ăс-хакăл еккипе кайса нумайăшĕ аташнă, ултавлă ĕмĕтсем вĕсен ăс-тăнне хавшатнă.*